чув 82,3(2Рос=Рус)
Х12
чув 747



# Хаваслă юмахсем

— Тепӗр хут тав тӑватӑп сана! — савӑннӑ кашкӑр. — Турӑпа тупа тӑватӑп, эсӗ шӑпах мана чӗртекен имҫам, санран кахалли тата айванни тӗнчере никам та ҫук!

Вара кашкӑр тӳрех Шейдулла ҫине сиксе ӳкнӗ.



## ЧЕЕ АЛДАР-КОСЕ

***Казах юмахӗ***

Пӗр аулта чее Алдар-Косе пурӑннӑ. Сухалӗ шӑтман, мӑйӑхӗ кӑна кӑшт палӑрнӑ. Унӑн куҫӗ витӗр курнӑ, ал-ури вӑр-вар пулнӑ. Ӑсӗ калама ҫук ҫивӗч пулнӑ. Алдар-Косе шӳт тума, кулма юратнӑ, уйрӑммӑнах айвансемпе хыткукарсене чике тӑршшӗ лартнӑ. Унӑн пуянлӑхӗ пулман, анчах хӑйӗн чеелӗхӗпе вӑл нихҫан та аптраса ларман, хӑй валли ҫуллӑ така та час-часах тупнӑ.

Ҫав аултах Жатыр-бай пурӑннӑ, вӑл ҫӑткӑн та айван выҫын пулнӑ. Унӑн кӗтӗвӗсене курсан, ҫын тӗлӗннӗ. Унти выльӑхсене вӑл шурӑмпуҫпе шутлама тытӑннӑ та хӗвел анаспа тин хисеплесе пӗтернӗ. Пӗрре ун патне Алдар-Косе пынӑ. Вӑл ӑна тараватлӑн:

— Хисеплӗ бай, манӑн икӗ тенкӗ укҫа пур, анчах енчӗкӗ ҫук. Ҫавӑнпа укҫана алӑрах тытса ҫӳретӗп. Мӗн тӑвас-ши? Алӑ шутсӑр ывӑнса ҫитрӗ. Ҫак укҫасенчен хӑтӑласчӗ манӑн. Пулӑшаймӑн-ши мана? — тенӗ.

— Пулӑшас, пулӑшас, — савӑннӑ бай. — Анчах кала, мӗн туса пулӑшас?

— Икӗ тенкӗлле мана пӗр-пӗр путсӗр качака путеккине сут-ха, — тенӗ Алдар-Косе.

Бай шухӑшланӑ-шухӑшланӑ та: «Юрӗ эппин. Сутӑп», — тенӗ, часах кӗтӳрен пӗр уксах та имшер качака путеккине